**Темшĕн, темшĕн сар хĕвел…**

Темшĕн, темшĕн сар хĕвел
Мана ăшăтасшăн мар.
Мана сивĕ... вилеп... пĕл —
Ун чух ăшшу кирлĕ мар.

Хăвăн ылтăн çутуна
Вăйлăрах яр çĕр çине,
Питĕ тĕттĕм вырăна
Ярса кăтарт çуттине.

Часрах, часрах, сар хĕвел,
Манăн пата ăшă яр.
Мана сивĕ... вилеп... пĕл —
Ун чух ăшшу кирлĕ мар.

Часрах, часрах, сар хĕвел,
Тĕттĕм çĕре çутă пар.
Тĕтĕм куçа хуплать... пĕл —
Суккăра çутă кирлĕ мар.

1920

*Ахах, И. «Темшĕн, темшĕн сар хĕвел…» : [сăвă] // Ахах, И. Атьăр социализмшăн çапăçма / И. Ахах. – Шупашкар, 1972. – С. 55.*